26-меш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ФЕВРАЛЬ
20
ВЫРСАРНИКУН
36(6531) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 18-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 18-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем ЛУГА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре тата кăнтăртарахра тăшмана ҫапăҫса малалла кусса пынă, темиҫе ял туртса илнĕ.

НОВГОРОД хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем ҫапăҫса малалла тапăнса пынă, Ленинград облаҫĕнчи ШИМСК район центрĕпе пысăк чугун ҫул станцине туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата НИЖНИЙ ПРИХОН, ВЕШКА, СТАРЫЙ ШИМСК ялĕсене йышăннă.

ИЛЬМЕНЬ кӳллинчен кăнтăртарахра пирĕн ҫарсем, наступлени пуҫласа ярса, СТАРАЯ РУССА хулипе чугун ҫул узелне туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата 40 ял ытла йышăннă. Вăл шутра—ПАРФЕЕВА, БОЛЬШАЯ КОЗАНКА, ЧИРИКОВА, ПЕННА, НАГАТКИНО, ОЖЕДОВО, ВЕЛИКОЕ СЕЛО, ЛОСЫТИНА, СОКОЛОВО, БАЙКОВА, СВЯТОГОРША ялĕсем.

ЗВЕНИГОРОДКА хулинчен ҫурҫĕтререхре пирĕн ҫарсем нимĕссен ҫавăрса илнĕ ҫарĕсене пĕтерни хыҫҫăн ШАНДЕРОВКĂРАН кăнтăртарахри ҫырма-ҫатрасемпе ращара тăшманăн сапаланса пĕтнĕ уйрăм ушкăнĕсем пытанса ҫӳренĕ, вĕсене халь пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, артиллерипе миномет-сен перестрелкисем тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн ҫапăҫнă.

Февралĕн 17-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем мĕнпур фронтсенче нимĕссен 61 танкне сĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитный артиллери тăшманăн 12 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Луга хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн ҫарсем тăшмана ҫапăҫса темиҫе ял туртса илнĕ. Пĕр районта совет подразделенийĕсем, шурлăхлă вырăнсемпе малалла кусса пырса, тăшман тылне тухнă та пĕр пысăк ялти нимĕҫ гарнизонне аркатса тăкнă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен пĕр батальона ҫити пĕтерсе тăкнă, 11 тупă, пĕр боеприпас складĕ тата ҫар пурлăхĕн 2 складне тытса илнĕ. Пирĕн старши сержант Орлов ертсе пыракан 6 боец тăшманăн ҫулпа пыракан отрядне курнă. Совет боецĕсем ҫулăн икĕ енче те засада тунă, нимĕҫсене ҫывăхах янă, унтан автоматсемпе пеме пуҫланă та 26 гитлеровеца вĕлернĕ. Чĕрĕн тăрса юлнă 30 нимĕҫ салтакĕ хăйсен командирĕпе обер-лейтенантпа пĕрле алăри хĕҫпăшала пăрахса тыткăна парăннă.

* * *

Новгород хулинчен кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре пирĕн ҫарсем тăшман хирĕҫ тăнине сĕмĕрсе тăкнă та Ленинград облаҫĕнчи Шимск районĕнчи пысăк чугун ҫул станцине тытса илнĕ. Шимскăри нимĕҫ гарнизонне пĕтерме хутшăннă пĕр подразделени нимĕҫсен пехотине икĕ батальона таран пĕтерсе тăкнă. Нимĕҫсен артиллери батарейĕсене, пулемечĕсене тата ҫурри хĕҫпăшалне тытса илнĕ, ҫавăн пекех тата боеприпассен складĕсене туртса илнĕ.

* * *

Ильмень кӳллинчен кăнтăртарахра пирĕн ҫарсем, артиллери персе хатĕрленнĕ хыҫҫăн, наступлени пуҫласа янă. Пĕр соединени чаҫĕсем тăшман оборонине вăйлă сирпĕнтерсе тăрăх сĕмĕрсе кĕнĕ те Старая Русса хулине кăнтăр-хĕвеланăҫ енчен ҫавăрса илнĕ. Ҫав вăхăтрах пирĕн ударлă отрядсем, ҫав тери хăвăрт атака туса, хулана хĕвелтухăҫ енчен вăркăнса кĕрсе кайнă. Нимĕҫсем Старая Русса хулинчен крепость туса хунă. Вĕсем темĕн чухлĕ дотсемпе дзотсем туса тултарнă, хулана пымалли урамсене чи темĕн чухлĕ мина лартнă, тата инженерла чăрмавсем туса тултарнă. Хаяр ҫапăҫу хыҫҫăн пирĕн ҫарсем Старая Русса хулипе чугун ҫул узелне туртса илнĕ. Гитлеровецсем темиҫе хутчен те контратакăсем тунă, анчах та вĕсен контратакисене пурне те сирсе янă. Ҫак ҫапăҫусенче тăшмана пысăк ҫухатусем кӳнĕ. Ҫитĕнĕве аталантарса пирĕн боецсем тата 40 ял ытла йышăннă. Пысăк складсем тата ытти трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Звенигородка хулинчен ҫурҫĕтререхре пирĕн ҫарсем ҫавăрса илнĕ нимĕҫ ҫарĕсене пĕтерсе тăкнă хыҫҫăн вĕсен сапаланса кайнă уйрăм ушкăнĕсем пытанса ҫӳренĕ, вĕсене халь пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Хăйсен пурнăҫне ҫăлма тăрăшса Шандеровкăран кăнтăртарахри пĕчĕк ращара ҫăлăнма хăтланнă нимĕҫ салтакĕсемпе офицерĕсен уйрăм ушкăнĕсене пирĕн боецсем пĕтерсе тăкнă. Ҫĕр каҫа тата кăнтăрла совет подразделенийĕсем ҫав ращана, ун ҫывăхĕнчи вырăнсене пĕтĕмпех тавра тухса тĕрĕсленĕ. Шанчăксăр ӳкнĕ нимĕҫ салтакĕсемпе офицерĕсен ушкăнĕсем нумайăшĕ хирĕҫ тăмасăр тыткăна парăннă. Тарса хăтăлма хăтланнă гитлеровецсене пĕтерсе тăкнă. Корсунь-Шевченковский районĕнче ҫавăрса илнĕ нимĕҫ ҫарĕсене пĕтерме пĕрле пулнă хыҫҫăн пирĕн ҫарсем тытса илнĕ трофейсене халĕ пухса шута илеҫҫĕ.

* * *

Крымри партизансен отрячĕсем январьпе февраль уйăхĕсенче нимĕҫсен фашистла оккупанчĕсене чылай хутчен пыра-пыра ҫапнă. Ҫав вăхăт хушшинче нимĕҫсен 6 ҫар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Партизансем 3 чугун ҫул станцийĕнчи ҫулсене ишсе пĕтернĕ, 80 автомашина пĕтерсе тăкнă, 2 горючи складне тата пĕр боеприпас складне сирпĕтерсе янă. Февралĕн 7-мĕшĕнче нимĕҫсемпе румынсен шултăра вăйĕсем партизансене хирĕҫ наступлени пуҫласа янă. 5 кун хушши пынă ҫапăҫусенче совет партизанĕсем гитлеровецсене халран ӳкернĕ, унтан вĕсене хăйсене хирĕҫ пырса ҫапнă. Ҫак ҫапăҫусенче гитлеровецсен 800 ҫынна ҫити пĕтнĕ. Тăшманăн каялла тарма лекнĕ. Вăл хăйĕн аманнă салтакĕсене офицерĕсене ҫапăҫу хирĕнчех пăрахса хăварнă.

* * *

Нимĕссен 550-мĕш штрафной батальонĕнчи 2-мĕш ротăран Витебск хули районĕнче тыткăна лекнĕ салтак Ульрих Гарт ҫапла каласа кăтартнă: «Эпĕ нимĕҫ ҫарĕнче капитан пулнăччĕ. Ун чухне эпĕ 4-мĕш авиаполевой дивизире 4-мĕш ротăн командирĕ пулнă. Иртнĕ ҫулхи октябрь уйăхĕнче офицерсен пухăвĕнче эпĕ ăнсăртран—ку вăрҫăра Германия пĕтсе ларатех, тесе каларăм. Ҫак сăмахсемшĕн мана военнополевой суд 8 уйăхлăха тĕрмене хупмалла турĕ тата офицер званине туртса илмелле турĕ. Ҫак наказание эпĕ Борисов хулинчи ҫар тĕрминче ларса ирттертĕм. Ку тĕрмере нимĕҫ офицерĕсем чылайăнах ларатчĕҫ. Манпа юнашар пӳлĕмре Зукау обер-лейтенант, Курт Бауэр лейтенант, Керх обер-лейтенант тата ыттисем те ларатчĕҫ. 1944 ҫулхи январь уйăхĕнче мана тĕрмерен срок туличчен кăларчĕҫ те 550-мĕш штрафной батальона рядовой салтак шучĕпе ячĕҫ. Эпĕ хам ăшра ĕнтĕ тахҫанах тыткăна парăнма хатĕр пулнă. Ҫавăнпа та, вырăс салтакĕсем пирĕн позицисем патне ҫывхарсанах, эпĕ ним хирĕҫ тămасăр, алăри хĕҫпăшала ҫĕре пăрахрăм».

* * *

Запорожье облаҫĕнчи Вознесенка ялĕнчи ҫынсем нимĕҫсен фашистла ирсĕрĕсем тунă тискер ĕҫсем ҫинчен каласа кăтартнă: «Гитлеровецсем совет ҫыннисене нимĕн хĕрхенмесĕр тискеррĕн пĕтерсе пычĕҫ. Пĕр кун хушшинче кăна вĕсем пирĕн ялти 100 ҫынна ытла персе пăрахрĕҫ. Нимĕҫсем асаплантарса вĕлернĕ хĕрарăмсен, стариксен тата шĕчĕк ачасен виллисене халĕ нумайĕшне ҫăлсемпе ҫырма-ҫатрасенче тупнă. Ялтан каялла тухса каяс умĕн фашистла бандитсем пирĕн ялти 8 вăтам шкулпа пуҫламĕш шкула, больницăна, зернохранилищĕне, электростанцие тата 1.300 яхăн колхозникĕн пурăнмалли ҫурчĕсене ҫунтарса ячĕҫ. Ҫак калама ҫук хăрушă тискер ĕҫсене нимĕҫ салтакĕсем хăйсен ҫар коменданчĕ Вирс палач ертсе пынипе турĕҫ. Вознесенка ялĕнчи пĕтĕм халăх ячĕпе эпир Хĕрлĕ Ҫар боецĕсене ҫапла чĕнсе калатпăр: «Ылханлă нимĕҫсене пĕр хĕрхенмесĕр вĕлерĕр! Эсир вĕсене вĕсем пирĕн тăван ҫĕршывра тунă мĕнпур преступленисемшĕн те тивĕҫлипе тавăрăр».

ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче

Ҫуракине хатĕрленсе ҫитес тĕлĕшпе фронтовой уйăхлăх ирттересси ҫинчен

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ февралĕн 25-мĕшĕнчен пуҫласа мартăн 25-мĕшне ҫитиччен республикăра ҫуракине хатĕрленсе ҫитмелли фронтовой уйăхлăх ирттерме йышăннă.

ВКП(б) Обкомĕ парти райкомĕсене уйăхлăх вăхăтĕнче вăрлăх хывас ĕҫе кашни колхозрах туса ҫитерме, ку ĕҫре колхозсем пĕр-пĕрне пулăшассине организациленме тата вăрлăхсене колхозниксенчен пухассине организациленме хушнă.

Уйăхлăх вăхăтĕнче тракторсене, ялхуҫалăх машинисене тата лаша инвентарьне пĕтĕмĕшпех юсаса пĕтермелле. Ҫавăн пекех кашни колхозрах лашасене пăхас ĕҫе вăйлатмалла, лашасене ҫураки валли питĕ лайăх хатĕрлемелле. Колхозсенче агротехникăлла пропагандăна анлăн сарса ямалла; лекцисем, докладсем тата калаҫусем туса колхозниксене агротехникăн шитех те кирлĕ мероприятийĕсемпе, ҫуракине ăнăҫлăн хатĕрленме тата ялхуҫалăх культурисене тухăҫлăн туса илме пулăшакан мероприятисемпе паллаштармалла.

Колхозсен правленийĕсен юсаса хатĕрленĕ мĕнпур инвентарьпе лашасене ҫуракинче колхозниксене ҫирĕплетсе памалла. Машинăсемпе инвентаре ҫирĕплетсе панă вăхăтра колхозсен правленийĕсем колхозниксене юсавсăр машинăсемпе инвентаре пăрахаҫлама тата вĕсене юсаса ҫитериччен йышăнмасăр тăма ирĕк параҫҫĕ.

ВКП(б) Обкомĕ парти райкомĕсене февралĕн 25-мĕшĕччен мĕнпур колхозсенче колхозниксен аслă пухăвĕсене ирттерме хушрĕ. Ҫав пухусенче фронтовой уйăхлăхăн задачисене ăнлантарса памалла тата колхозниксене ҫуракине хăвăртрах хатĕрленнĕ ҫĕре мобилизацилемелле.

Уйăхлăх пĕтнĕ чухне мĕнпур районсенче ҫуракине мĕнле хатĕрленсе ҫитнине колхозсем пĕр-пĕрне тĕрĕслес ĕҫе туса ирттермелле, ҫавăн пекех колхозсенче общественăлла смотрсемпе сăнавлă ĕҫе тухассине организацилемелле.

Республикăри тата районсенчи хаҫатсен редакцийĕсене фронтовой уйăхлăх ҫинчен анлăн ҫутатса тăма хушнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕ инвалидсен коопераци артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 ҫулхи январь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, ăмăртура Шĕнерти (Калинино районĕ) «20 лет Чувашии» артель (правлени председателĕ Кудряшов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Валеев юлташ) мала тухнă тесе йышăннă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕпе, Улатăрти «Союз инвалидов» артельрен илсе, Шĕнерти «20 лет Чувашии» артеле памалла тунă. Ăмăртура уйрăмăнах палăрнă работниксене премилеме 15 пин тенкĕ укҫа памалла тунă.

Йĕпреҫри «Помощь» артеле (правлени председателĕ Ларин юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Алексеев юлташ) ăмăртура уйрăмăнах палăртнă работниксене премилеме 10 пин тенкĕ укҫа памалла тунă.

Совнарком январь уйăхĕнче Комсомольски районри «Красный инвалид», Ҫĕмĕрлери «Партизан», Сĕнтĕрти «Производственник», Улатăрти «Союз инвалидов», Чаканарти (Ишлей районĕ) «Красный стрелок» артельсем уйăхри задание ытлашшипех пурнăҫланине палăртнă

Йĕпреҫ тата Елчĕк МТС-ĕсем тракторсене юсаса пĕтернĕ

Шăхасан, Комсомольски, Красноармейски МТС-сем хыҫҫăн Йĕпреҫ тата Елчĕк МТС-ĕсем те тракторсене юсаса пĕтерчĕҫ.

ХАЛĂХ ТАВАТЬ

СМОЛЕНСК. Гитлер оккупанчĕсем ишнĕ Ельня хулине унăн тавралăхĕнчи ялсенче юсас ĕҫ анлăн саралса пырать. Районри ĕҫсыннисем 20 километр тăршшĕ ансăр чугун ҫул тума пуҫланă. Ăна вутă турттарма тăваҫҫĕ. 12 километр тăршшĕ тунă та ĕнтĕ. Тата кĕперсем тăваҫҫĕ. (ТАСС)

Ялхуҫалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ

1944-мĕш ҫулта ялхуҫалăх ĕҫĕсен государство планне чи лайăх пурнăҫлассишĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫе вăйлатассишĕн Марипе Мордва АССР-ĕсемпе социализмлă ăмăртăва тухса Чăваш АССР-ĕ хăй ҫине илнĕ

ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕМ

„Хĕрлĕ Ҫарпа совет халăхĕ нимĕҫ захватчикĕсене хирĕҫ кĕрешес ĕҫре иртнĕ ҫулталăк хушшинче пысăк ҫитĕнӳсем турĕҫ. Эпир вăрҫă ĕҫĕсене тĕпренех хамăр ҫĕршыв майлă улăштартăмăр, вăрҫă халĕ ĕнтĕ татăклăн вĕҫленесси патне пырать. Анчах совет ҫыннисем тунă ҫитĕнӳсемпе лăпланса ларма, хăйсен ҫитĕнĕвĕсемпе мухтанма вĕренмен. Лăпланса ларма тытăнсан, ҫĕнтерĕве алăран вĕҫертме пулать. Ҫапăҫмасăр, вăй хумасăр ҫĕнтерме ҫук. Ҫĕнтерĕве ҫапăҫса туяҫҫĕ. Ҫĕнтерӳ ҫывăх ĕнтĕ, анчах та ăна алла ҫавăрса илес тесен, ҫĕнĕрен ытларах вăй хуни, пĕтĕм тыл хăйне-хăй шеллемесĕр ĕҫлени, фронтра Хĕрлĕ Ҫар пĕлсе тата татăклăн кĕрешни кирлĕ.

И. СТАЛИН".

Отечественнăй вăрҫă фрончĕсенче Хĕрлĕ Ҫар туса пыракан чаплă ҫĕнтерӳсемпе хавхаланса, фронта пур енчен те пулăшма тăрăшса, Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-пе совхозсенчи работниксем 1943-мĕш ҫулта хăйсен уй-хирĕсенче ырми-канми тăрăшса ĕҫлерĕҫ, пысăк тухăҫлă тырпул туса илчĕҫ, пĕрлештернĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫе малашне те вăйлатса пырса ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем турĕҫ.

Иртнĕ ҫулта Чăваш АССР-ĕнчи колхозсем гектартан 12 центнер ытларах тĕштырă туса илчĕҫ, вĕсем государство умĕнчи обязательствăсене срокченех тултарчĕҫ, 1944-мĕш ҫулшăн натуроплата шучĕпе тата Хĕрлĕ Ҫар фондне 105 пин пăт тырă хыврĕҫ, кунсăр пуҫне колхозсемпе колхозниксем государствăна 2527 пин пăт тырă сутрĕҫ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство планне те ăнăҫлăн тултарнă: мăйракаллă шултăра выльăхсем тĕлĕшпе плана 114,0%, сыснасем тĕлĕшпе—108,7%, сурăхсем тĕлĕшпе—112,0% тултарнă. 1942—1943-мĕш ҫулсем хушшинче колхозсенчи мăйракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ 58,7%, сыснасен хисепĕ 5,7%, сурăхсен хисепĕ 99,7% ӳсрĕ. Государствăна аш-какай парас плана срокченех тултарнă—1942-мĕш ҫулхипе танлаштарсан, государствăна 207.314 пăт ытларах аш-какай панă. Нимĕҫ оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене 7.000 пуҫ ытла выльăх янă. Анчах, ҫак ҫитĕнӳсене тунă пулин те, эпир тырпулсемпе выльăх-чĕрлĕхсен тухăҫлăхне хăпартас тĕлĕшпе хамăр тума пултарнă майсемпе пĕтĕмĕшпех усă курман-ха. Тăшмана ҫĕмĕрсе малалла кайса пыракан Хĕрлĕ Ҫара пулăшас ĕҫе пирĕн кулленех вăйлатса пымалла. Фронтпа ҫĕршыва тырă, ҫĕрулми, пахча ҫимĕҫĕсем, аш-какай, ялхуҫалăхĕн ытти продукчĕсене пирĕн ытларах та ытларах парса тăмалла.

1944-мĕш ҫулта ялхуҫалăх ĕҫĕсен государство планне чи лайăх пурнăҫлассишĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫе вăйлатассишĕн Марипе Мордва АССР-ĕсемпе социализмлă ăмăртăва тухса, Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсенчи работниксем, ялхуҫалăхĕнчи специалистсем хăйсем ҫине ҫак обязательствăсене илеҫҫĕ:

1. Кашни гектар пуҫне 12,5 центнертан кая мар тĕштырă, 3 центнертан кая мар йĕтĕн сӳсĕ, 4 центнертан кая мар кантăр, 15,0 центнертан кая мар махорка, 105 центнертан кая мар ҫĕрулми туса илмелле.

2. Ҫак тĕлĕшпе пĕтĕм уй-хир ĕҫĕсене малта тăракан агротехника кăтартнă пек туса ирттермелле, ир акмалли тĕштырă культурисене 10—12 кун хушшинче акса хăвармалла.

3. Кашни колхозрах вырăнти удобренисем хатĕрлес плана тултармалла, пĕтĕм республикипе тислĕк 1.800.000 тоннăран кая мар, торф 200.000 тоннăран кая мар, кĕл 80.000 центнертан кая мар, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 60.000 центнертан кая мар хире кăлармалла.

4. Тĕштырă культурисене 100.000 гектар ҫине яровизациленĕ вăрлăхпа акмалла, 7.000 гектар ҫине яровизациленĕ ҫĕрулми лартмалла, 25.000 гектар ҫинчи кĕрхи тырăсемпе ҫурхи тырăсене апат памалла.

5. Кашни колхозрах курăксем акса хăвармалли плана пурнăҫламалла. Пĕтĕм республикипе нумай ҫул хушши ӳсекен курăксене пурĕ 30.000 гектартан кая мар акса хăвармалла. Кашни колхозрах курăксене акса тăвас ĕҫе ҫитес икĕ ҫул хушшинче анлăн сарса ярас тĕлĕшпе кирлĕ вăрлăха ҫителĕклĕ таран туса илмелĕх уйрăм вăрлăх участокĕсем уйăрса хăвармалла.

6. Тракторсене, тракторсенчен кăкарса ĕҫлемелли машинăсене, лашасемпе ĕҫлемелли ялхуҫалăх инвентарĕсене апрелĕн 1-мĕшĕччен, комбайнсене, молотилкăсене, тырпулсем пухса кĕмелли ялхуҫалăх машинисене июлĕн 1-мĕшĕччен юсаса пĕтермелле.

7. Тракторпа ĕҫлес тĕлĕшпе государство планне тултарса, вăтам шутпа кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 320-шер гектар ҫĕр ĕҫлемелле, кашни комбайнпа 110-шар гектартан кая мар тырă пухса кĕртмелле, тракторпа ĕҫлекен кашни молотилкăпа 450-шар тоннăран кая мар тĕштырă ҫапмалла. Трактор ĕҫĕсен хакĕпе горючи расхочĕн хисепне 5% чакармалла.

8. Кĕрхи тырпулсене 10 кун хушшинче, ҫурхи тĕштырсене 15 кун хушшинче ҫулса-вырса пĕтермелле. Утă ҫулас ĕҫсене тырпулсене вырма тухиччен 10 кун маларах туса пĕтермелле.

9. Ҫулса-вырса пухнă тырпулсене тыр вырма тухнă хыҫҫăн 5 кунтанах капана хывма тытăнмалла, пухнă тырпулсене вырса пĕтернĕ хыҫҫăн 10 кунтан кая хăвармасăр капана хывса пĕтермелле.

10. Ҫулса-вырса пухакан тырпулсене тыр вырма тухнă хыҫҫăн 3—5-мĕш кунĕнчен ҫапма тытăнмалла, мĕнпур тырпула ноябрĕн 1-мĕшĕччен ҫапса пĕтермелле. Вăрлăхлăх акнă нумай ҫул хушши ӳсекен курăксене ҫулнă хыҫҫăнах ҫапма тытăнмалла, вĕсене 20 кунтан кая хăвармасăр ҫапса пĕтермелле.

11. Ҫĕртме туса тĕрлĕ удобренисемпе лайăх ҫемĕҫтернĕ ҫĕр ҫине кĕрхи тырăсене августăн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр акса хăвармалла.

12. Государствăна ялхуҫалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокченех тултармалла.

13. Пĕрлештернĕ выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерсе, вĕсен тухăҫлăхне хăпартас тĕлĕшпе государство планне кашни колхозăнах тултармалла, лашасен шутне 6%, мăйракаллă шултăра выльăхсен шутне 15%, сыснасен шутне 25%, сурăхсемпе качакасен шутне 21% ӳстермелле.

14. Кашни 100 кĕсре пуҫне 50 тихаран кая мар пăхса ҫитĕнтермелле, кашни 100 сурăх пуҫне 110 путекрен кая мар, кашни сысна ами пуҫне вăтамран 11 ҫăвăртан кая мар пăхса ҫитĕнтермелле. Кашни усракан ĕне пуҫне вăтамран 1100 литртан кая мар сĕт суса илмелле, кашни сурăхран вăтам шутпа 2,3 килограмшар ҫăм касса илмелле.

15. Пур колхозсенче те хур-кăвакал фермисем тумалла, ҫак тĕлĕшпе 1944-мĕш ҫулта кашни колхозăнах 10—15 пуҫран кая мар хур-кăвакал туянмалла.

16. Пĕрлештернĕ выльăх-чĕрлĕхсем валли ҫителĕклĕ таранах апат хатĕрлемелле, 130.000 тоннăран кая мар силос хывса хăвармалла.

17. Хурт-хăмăр ҫук колхозсенче кашнинчех утарсем тумалла, вĕсенче 40 вĕллерен кая мар хурт-хăмăр пулмалла.

18. Сивĕпе хăрса пĕтнĕ мĕнпур садсенчен ҫуррине кая мар 1944-мĕш ҫулта ҫĕнĕ йывăҫсем лартса чĕртмелле, халиччен садсем пулман колхозсенче пĕр гектартан кая мар ҫĕр лаптăкĕ ҫине улмуҫҫисемпе ҫырла йывăҫҫисем лартмалла. Колхозниксен кил вырăнĕсен участокĕсем ҫине 10—15-шер тĕп улмуҫҫи, 20—25-шер тĕп ҫырла йывăҫҫисем лартмалла.

19. Ҫураки ĕҫĕсем пуҫланиччен машинăсемпе ĕҫлеме пултаракан 760 ҫын, колхоз председателĕсене 100 ҫын, счетоводсене, уй-хир ĕҫĕсен бригадирĕсене, ферма заведующийĕсене пурĕ 4300 ҫын вĕрентсе хатĕрлемелле, ҫавăн пекех тата звено руководителĕсене, пахча-ҫимĕҫ тăвакансен руководителĕсене, яровизаторсене, выльăх-чĕрлĕх пăхса ӳстерекенсене тата колхозри ытти кадрсене вĕрентсе кăлармалла.

Хаклă юлташсем! Колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-сенпе совхозсенчи работниксем, ялхуҫалăхĕнчи специалистсем! Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ пире фронта татах та ытларах пулăшма, фронтпа ҫĕршыва ытларах та ытларах ялхуҫалăх продукчĕсем пама чĕнчĕ. Ҫулпуҫăмăр чĕннине ответлесе, ҫуракине ăнăҫлăн хатĕрленессишĕн, пысăк тухăҫлă тырпул туса илессишĕн социализмлă ăмăрту ĕҫне татах та анлăрах сарса ярар. Пĕтĕм Союзĕпе пыракан социализмлă ăмăртура республика пĕрремĕш вырăн йышăнтăр тесе мĕнпур вăйпа тăрăшар.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ, нимĕҫсен фашистла захватчикĕсене ҫĕнтерессишĕн пыракан кĕрешĕве организацилесе хавхалантарса пыракан Ленин—Сталин партийĕ сывă пултăр!

Хамăрăн ҫулпуҫăмăр, учителĕмĕр Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ сывă пултăр!

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ЯЛХУҪАЛĂХĔНЧЕ МАЛТА ПЫРАКАНСЕН КАНАШЛĂВĔНЧЕ 1944 ҪУЛХИ ФЕВРАЛĔН 17-МĔШĔНЧЕ ЙЫШĂННĂ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăвашсен юрăпа ташă государство ансамблĕн артисчĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси ҫинчен

Театр искусстви тĕлĕшпе тунă ҫитĕнӳсемшĕн Чăвашсен юрăпа ташă государство ансамблĕн ҫак артисчĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Филипп Миронович Лукина
2. Зинаида Михайловна Павловăна
3. Иван Дмитриевич Шубина.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА

Чăваш АССР Верховный Совет. Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 ҫулхи февралĕн 18-мĕшĕ.

Донбасс ачисене—парнесем

ОКТЯБРЬСКОЕ. Энтри пасарĕнчи туллимар вăтам шкулта вĕренекен ачасем Донбассри ачасене пулăшма 2.400 тенкĕ укҫа пухса пачĕҫ. Хĕрлĕ Ҫар 26 ҫул тултарнă ятпа вĕсем парнесем ярса пама хатĕрленеҫҫĕ.

Ҫавăн пекех Октябрьскинчи вăтам шкул коллективĕ те Донбассри ачасем патне 3 посылка ярса парать.

А. ХАТАЕВСКИЙ.

Республикăри колхоз ҫамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ

Ĕнер, февралĕн 19-мĕшĕнче, Шупашкарта, колхоз ҫамрăкĕсен республикăри йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ пуҫланчĕ. Программа тăрăх хĕрарăмсен виҫшерĕн 3 километра, арҫынсен виҫшерĕн 5 километра военизированнăй похода кайса килмелле.

Ăмăрту февралĕн 28-мĕшĕччен пырать. Малтанхи кун ăмăртăва Сĕнтĕрвăрри, Ишлей, Шупашкар, Ҫĕрпӳ, Шăхасан, Канаш районĕсем хутшăнчĕҫ. 3 километрлă походра Шупашкар районĕнчи хĕрарăмсен, 5 километрлă походра Ҫĕрпӳ районĕнчи арҫынсен командисем пĕррремĕш вырăна йышăнчĕҫ.

А. ВАСИЛЬЕВ.

Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарас умĕн

Хĕрлĕ Çар кунĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăчĕç

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводра вагонсем тăвакан цех коллективĕ Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă куна производствăри çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн стахановла вахтăна тăчĕ. Панфилов, Сергеев, Алексеев стахановецсем задание кашни кунах 300 процент тултарса пыраççĕ. Çавăн пекех Николаева, Киселева, Пименова стахановкăсем те ĕç нормине тăтăшах 250—300 процент тултараççĕ.

Мирошниченко юлташ ертсе пыракан фронтовой бригада кăтартуллăн ĕçлет. Высоцкий, Ефимов, Степанов стахановецсем ĕç нормине куллен кун иртерсе тултараççĕ.

Плана Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне пурнăçлассишĕн

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Комбинат январь уйăхĕнчи производство планне 121,8 процент тултарнă. Хигин, Жук, Нефедов юлташсем начальник пулса ĕçлекен цехсем кашни уйăхрах малта пыраççĕ. Ку цехсем поточнăй меслетпе ĕçлеме тытăнса, сахал йышлă рабочисемпех ĕç тухăçлăхне хăпартса пыраççĕ. Слесарь Худяков кулленхи задание 500 процента çити тултарма тытăнчĕ.

Комбинатра 50 комсомолецпа çамрăкăн фронтовой бригади икхăçанхинчен тухăçлăрах ĕçлет.

Комбинатри рабочисемпе работницăсем паттăр Хĕрлĕ Çар уявĕ тĕлне производство планне пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Паллă стахановкăсем Благовещенская, Пешкова юлташсем çак кунсенче задание виçĕ-тăватă хут иртерсе тултарма тытăнчĕç.

А. ВАГАНОВА.

Уяв парнисем хатĕрлеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри комсомолецсем пуçарнипе, Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа Балтика флотĕнчи шефа илнĕ чаçе яма парнесем хатĕрлеççĕ. Паянхи куна 150 килограмм çăнăх, 300 килограмм какай леçсе панă. Кунсăр пуçне 30 килограмм çу, 10 килограмм пыл, 15 килограмм махорка, 20 литр эрех тата 40 уйрăм посылка пулать.

КАЛИНИНО, февралĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Комсомолăн «Самолет» колхозри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ И. Петров) Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа фронтовиксем валли парнесем хатĕрлерĕ. Вăл шутран Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флотĕнчи моряксем патне 20 килограмм какай, 3 килограмм типĕтнĕ чăкăт, 2 килограмм премĕк тата сăмса тутрисемпе алшăллисем, махорка янă.

Фронтовиксен ачисене пулăшма

ÇĔРПУ, февралĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Комсомолăн «Броневик» колхозри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Филиппова юлташ) фронтовиксен ачисене пулăшас тĕлĕшпе ятарласа воскресник туса ирттерчĕ. Çак воскресникре фронтовик ачисене пулăшмалли фонда 5 килограмм какай, 72 килограмм çĕрулми, 22 килограмм сухан, 3 килограмм кĕрпе, 7 пуç тутри, 800 грамм сÿс, 585 тенкĕ укçа хывнă.

П. ПАВЛОВ.

Депутатсем суйлавçăсем умĕнче

Шупашкар райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ ялсовет депутачĕсен отчечĕсене ирттерес ĕçе политикăллă пысăк кампани вырăнне хурса организацилесе пыраççĕ. Отчетсем ирттермелли плана райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕн ларăвĕсенче сÿтсе-явнă, вĕсене кашни ялсоветнех çитернĕ. Ялсоветсене отчетсем ирттерес тĕлĕшпе пулăшма партипе совет активне янă.

Ялсовет депутачĕсен отчечĕсем Хыркасси тата Сарапайкасси ялсовечĕсенче лайăх иртеççĕ. Унта депутатсем суйлавçăсене хăйсен ĕçĕсем çинчен тĕплĕн те уçăмлăн каласа пачĕç.

Хыркассинче отчетлă пухăва суйлавçăсем пурте тенĕ пекех пухăннă. Пухура А. Григорьева депутат тата ялсовет исполкомĕн председателĕ депутат Н. Максимов отчетсем туса панă. Доклад хыççăн суйлавçăсем 25 ыйту панă, пренире 14 çын тухса каланă. Суйлавçăсем ялсовечĕн ĕçне пур тĕлĕшпе те тĕплĕн тишкерсе критикленĕ. Суйлавçă А. Егорова ялсовет председателĕ вулав çурчĕсен ĕçĕпе интересленменнине, çавăнпа та вулав çурчĕ плансăр ĕçленине палăртрĕ. Чылай суйлавçăсем художествăллă пултарулăх кружокĕсем начар ĕçленине, письмоносецсем хаçатсемпе çырусене йĕркеллĕ тăратманнине палăртрĕç. Суйлавçă К. Пахомова юлташ колхозсенче ĕç кĕнекисене вăхăтра çырса пыманни çинчен каланă. Колхозра ĕç кĕнекисене икĕ-виçĕ уйăх хушши çырман. Ялсовет председателĕ Максимов çав ĕçпе интересленмен, колхоз председателĕсем умне ялхуçалăх артелĕн уставне çирĕппĕн пурнăça кĕртсе пырас ыйтăва çирĕппĕн лартман. Смирновăпа Михайлова юлташсем ялсовет депутачĕсем колхозниксене государствăна тырă сутнăшăн промышленность таварĕсем мĕнле сутнине тĕрĕслеменни çинчен каланă тата ытти те.

Санюккасси ялĕнче Шорка ялсовет председателĕ Чуванов депутат доклад туса панă. Анчах та докладра хăйĕн ĕçĕсене тĕплĕн çутатса паман. Çавăнпа та чылайĕшĕ ăна ыйтусем нумай панă. Вĕсем фронтовиксен çемьисене пулăшас, ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене юсас, колхозсенчи стахановецсемпе ударниксене палăртас, шкулсене пулăшас ĕçсем начар пынине палăртнă. Суйлавçăсем хăйсен сăмахĕсенче ялсовет плансăр ĕçленине, ĕç хучĕсене тирпейсĕр тыткаланине, ялсовет çумĕнчи ялан ĕçлекен комиссисем ĕçлеменнине палăртнă. Вĕсем çитменлĕхсене çывăх вăхăтрах пĕтерме паха сĕнÿсем нумай панă.

Ялсовет депутачĕсен отчечĕсем пуçланнăранпа чылай ялсовечĕсенчи колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç лайăхланчĕ. Сарапайкасси, Шăмăш ялсовечĕсем çуракине хатĕрленес енĕпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Ку ялсовечĕсенчи колхозсем çуракине хатĕр ĕнтĕ. Вĕсем вăрлăхсене пĕтĕмпех сортласа тĕрĕсленĕ, ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтернĕ, удобренисем нумай хатĕрленĕ. Асăннă ялсоветсем фронтовиксен çемьисене пулăшас тата ытти ĕçсене пурнăça кĕртес тĕлĕшпе те начар мар ĕçлеççĕ.

Отчетлă пухусенче суйлавçăсем ялсоветсен тата уйрăм депутатсен ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе нумай паха сĕнÿсем параççĕ. Çав сĕнÿсене пурнăça кĕртни ĕçе лайăхлатма, ялти мĕнпур ĕçсене вăхăтра туса пыма май парать.

М. ПРОХОРОВ.

Депутатсен ĕçĕсене тишкĕреççĕ

Элĕк районĕнчи Ехремкасси ялсоветĕнче 4 колхоз. Ялсовет депутачĕсем вĕсене начар мар ертсе пыраççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ колхозсем иртнĕ çулта тыр пулăсене 23—25 кун хушшинче пухса кĕнĕ. Государство умĕнчи парăмсене срокчен, ытлашшипех парса татнă. Сăмахран, 69,74 центнер аш-какай памалла пулнă пулсан, 113,65 центнер, сĕт 16.186 литр (планпа 14.929 литр памаллачĕ) панă. Кунсăр пуçне государствăна кооператуци урлă 8.000 пăт тырă, 100 пăт çĕрулми сутнă.

Халĕ ялсоветĕнчи колхозсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Кашниех çителĕклĕ таран вăрлăх хатĕрленĕ, ялхуçалăх машинисене юсанă, уя 2.000 лав тислĕк кăларнă.

Суйлавçăсем ялсовет исполком председателĕн Дмитриева депутатăн отчетне итленĕ хыççăн, çитменлĕхсем çинчен тухса каларĕç. Вĕсем вулав çурчĕ япăх ĕçленине, Куракăш ялĕнчи ялсовет депутачĕ Кузнецова юлташ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çителĕксĕр ертсе пынине палăртрĕç.

Тени ялсоветĕнче те отчетлă пуху активлăн иртрĕ. Суйлавçăсем пурте пекех пухăва пынă. Вĕсем хăйсен депутачĕсен 4 çул хушшинчи ĕçĕсем çинчен сÿтсе-яврĕç. Çитменлĕхсене критиклерĕç.

Суйлавçăсем палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе сĕнÿсем чылай пачĕç.

Х. ЛИСИН.

Римский-Корсаков çуралнăранпа 100 çул тултарнине палăртма комисси тунă

Кăçал мартăн 18-мĕшĕнче вырăссен аслă композиторĕ Николай Андреевич Римский-Корсаков çуралнăранпа çĕр çул тултарать. Çакна паллă тăвас майпа Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри комисси тунă. Комиссие çак юлташсене кĕртнĕ: Кălкан (Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен Управленийĕн начальникĕ), Иванов (ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ), Евлампьев (Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ), Лисков (Чăваш АССР-ĕн искусствăн тава тивĕçлĕ деятелĕ), Ислюков (ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ), Лукин (композитор), Орлов-Шуçăм (Чăвашсен Государство филармонийĕн художествăллă руководителĕ), Праудин (Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ артисчĕ).

Чăваш АССР Совнаркомĕ çак комиссие Римский-Корсаков çуралнăранпа çĕр çул тултарнипе палăртса хăварас май тумалли мероприятисене хатĕрлеме хушнă.

Ют çĕршывсенче

АНГЛИРЕ ХĔРЛĔ ÇАР КУННЕ УЯВЛАМА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

ЛОНДОН, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паллă композитор Бакс поэт-лауреатăн Мейсфильдăн Хĕрлĕ çар кунĕ ячĕпе çырнă сăввисем валли музыка çырса хатĕрленĕ. Англире Хĕрлĕ Çар кунне уявлама хатĕрленеççĕ. Çав произведение концертра выляса параççĕ, оркестра Серджент дирижер ертсе пырать. Çав концертра Лондонри симфони оркестрĕ, Королевски хор обществи тата çар оркестрĕсем пулаççĕ.

ÇУРÇĔР АФРИКĂРА ХĔРЛĔ ÇАР 26 ÇУЛ ТУЛТАРНИНЕ УЯВЛАМА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

ЛОНДОН, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Афи агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Франци халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитет Анри Кей председатель пулса ертсе пынă ларăвĕнче Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнине Алжирта тата Çурçĕр Африкăра уявласа ирттерме йышăннă. Çарĕç комиссарĕ тата авиаци комиссарĕ çав кун хăнасем йышăнаççĕ.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Америкăн 5-мĕш армийĕн фронтĕнче тата кĕпер çывăхĕнчи укреплениесен районĕнче союзниксем тăшмана хĕссе пынă. Кассинора йывăр çапăçусем пыраççĕ. Анцио фронтĕнче тăшманăн пысăках мар вăйĕсен атакине сирсе янă. Англин 8-мĕш армийĕн разведка тăвакан чаçĕсем пĕтĕм фрончĕпех çапăçнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Çурçĕр Италири чугун çулĕсене тата ытти çар объекчĕсене атакăланă. Истребительсем союзниксен разведка тăвакан чаçĕсене кĕпер çывăхĕнчи укреплениесен районĕнче наступлени туса пулăшса пынă.

ЛОНДОН, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çар карапĕсем артиллерирен персе американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсене пулăшса тăнă. Февралĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен эсминецĕсем тăшманăн Корчула утравĕ çинчи (Югослави çыранĕсем çывăхĕнче) çар объекчĕсене пенĕ.

Англин 8-мĕш армийĕпе американецсен 5-мĕш армийĕн фронтĕнче патрульсем çапăça-çапăça илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ çаплах тăшманăн çар объекчĕсемпе транспорчĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Ĕнер союзниксен авиацийĕ „Вăта-çĕр тинĕс районĕнче 1.000 вĕсев тунă.

ЧЕРЧИЛЛЬ АНГЛИН ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН ИТАЛИРИ ÇУХАТĂВĔСЕМ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль общинăсен палатинче февралĕн 16-мĕшĕнче çапла каланă: Британи çарĕсем Итали çĕрĕ çине пырса аннăранпа, урăхла каласан, сентябрĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 12-мĕшне çитиччен, Англи çарĕсен тата доминионсемпе Индин хĕçпăшаллă вăйĕсен Италире 36.626 çын стройран тухнă, вĕсенчен 7.635 çын вилнĕ, 23.383 çын аманнă, 5.608 çын пĕр хыпарсăр çухалнă. Флотпа авиацин çухатăвĕсем çак шута кĕмеççĕ.

„Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ чаплă çĕнтерĕвĕ"

АНГЛИРИ ТАТА АМЕРИКĂРИ РАДИО КОРСУНЬ-ШЕВЧЕНКОВСКИЙ РАЙОНĔНЧЕ ХУПĂРЛАСА ИЛНĔ НИМĔÇ ÇАРĔСЕНЕ ПĔТЕРСЕ ТĂКНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Корсунь-Шевченковский районĕнче хупăрласа илнĕ нимĕçсен фашистла çарĕсене пĕтерсе тăкнине Лондонри радио Хĕрлĕ Çарăн питĕ чаплă çĕнтерĕвĕ тесе хаклать.

Радиопа ăнлантарса паракан Патрик Лейси çапла калать: Корсунь районĕнче хупăрласа илнĕ нимĕçсен 10 дивизийĕ вилес умĕнхи пек çапăçни çинчен калакан хыпарсем, унтан çав дивизисене пĕтерсе тăкни çинчен калакан хыпарсем —Российăран килнĕ чи паха хыпарсем пулса тăчĕç. Çак çĕнтерÿ вăл михĕ ăшне кĕрсе ÿкнĕ нимĕçсене атакăланă вырăс çарĕсен çĕнтерĕвĕ çеç мар, вăл çав хупăрласа илнĕ дивизисене çăлма хăтланса çав тери вăйлă атакăланă нимĕç çарĕсене сирсе янă совет чаçĕсен çĕнтерĕвĕ те пулса тăрать. Патрик Лейси çапла калать: Хĕрлĕ Çарăн çак çĕнĕ çĕнтерĕвĕ кăнтăр фронтĕнчи çар ĕçĕсемшĕн питĕ паха çĕнтерÿ пулса тăрать.

Корсунь районĕнче хупăрласа илнĕ нимĕçсен группировкине пĕтерсе тăкни, тепĕ тепĕр радиопередачăра, нимĕçсене хытă пырса çапни пулса тăрать. Вăл малашнехи вăрçă ĕçĕсенче лайăх паларĕ. Корсунь районĕнче нимĕçсем пк енчен пысăк сиен курчĕç: пĕр енчен, Германи командованийĕ хăйĕн хупăрласа илнĕ çарĕсене çухатрĕ, тепĕр енчен, вăл çав çарсене çăлма янă чаçĕсене çухатрĕ. Корсунь районĕнчи операци Германин çар чапне тепĕр хут вăйлă пырса çапрĕ.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Мускаври, тенĕ Нью-Йоркри радио, тупăсем çĕнĕрен салют панă, вĕсем Хĕрлĕ Çар çĕнĕрен чаплă çĕнтерÿ туни çинчен пĕлтернĕ. Вырăс халăхĕн мухтанмалли пур. Тăшмана калама çук вăйлă пырса çапнă. Нимĕçсен 11.000 салтакĕпе офицерĕ тыткăна парăннă. Хупăрласа илнĕ 10 дивизирен çавсем анчах тăрса юлнă ĕнтĕ, мĕншĕн тесен 52.000 çынна вĕлернĕ, кунсăр пуçне, хупăрласа илнĕ çарсене пулăшмашкăн кĕрсе кайма хăтланнă 20.000 нимĕçе вĕлернĕ.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, виçĕ кун хушши çапăçнă хыççăн оккупантсен çарĕсем Босанско Грахово хулине туртса илнĕ. Фронтăн çав участокĕнче нимĕçсемпе пĕрле Михайловичăн 500 четникĕ çапăçнă. Халь çапăçусем Босанско Грахово таврашĕнче пыраççĕ.

Хĕвелтухăç Боснире Рогатица-Прача фронтĕнчи участокра халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем малалла тапăнса пыраççĕ.

Хорватире Калник-Копривница—Людберг секторĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн Сремри чаçĕсем январь уйăхĕнче тăшманăн чугун çул транспортне 50 хутчен тапăннă.

Далмацин çурçĕр çыранĕ патĕнчи пур утравсене те, Углянпа Пашмансăр пусне, каллех тăшмантан тасатнă.

БЕЛЬГИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

Бельгин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, гитлеровецсем политика енĕпе айăпласа Бельгири тĕрмесемпе крепоçсене хупнă çынсене пурне те Германие ăсатнă. Çав çынсене Гиммлер Бельгире пулнă вăхăтра хушнă тăрăх куçарнă пулмалла. Министерство тата çакăн çинчен пĕлтерет: оккупантсем 1920, 1921 çулсенче çуралнă бельгиецсене мобилизацилеме хăтланни путланса ларнă. Пурĕ 12.000 çынна мобилизацилемелле пулнă, анчах гитлеровецсем Германие 450 çын кăна яма пултарнă.

Бельгире вăрттăн тухакан «Верите» ятлă хаçат Бельгире çĕркăмрăк кăларасси чакса пынине паллă тăвать. Гитлеровецсен пуçлăхĕ Шпонеман, çĕркăмрăк кăларакан рабочисем ĕçлемесен, вĕсене хаяррăн айăплатпăр тесе пĕлтернĕ. Анчах, апла пулсан та, ĕçрен пăрăнасси пĕрре те чарăлмасть. Шахтăна ĕçлеме пыманни вĕçĕмсĕр ÿссе пырать. Октябрь уйăхĕнче шахтăра 8.134 ĕç кунĕ çухалнă. (ТАСС).

США-ри ЧЕХСЕМПЕ СЛОВАКСЕН ХАÇАЧĔСЕМ ПОЛЬША ПРАВИТЕЛЬСТВИН ПОЛИТИКИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Оверсис Ньюс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, США-ри чехсемпе словаксен хаçачĕсем Польшăн эмиграцири правительствине питĕ хытă критĕклеççĕ. Совет Союзĕн çарпа экономика хăвачĕ тĕнчене гитлеризмран çăлса хăварчĕ, тесе каласа, чехсен Чикагăра тухакан «Новадоба» ятлă хаçачĕ Польша правительствине Совет Союзĕпе Польша чикки çинчен кирлĕ мар çĕртен «ыйту» кăларса тăратнăшăн ятлать. Хаçат çакна палăртать: тĕнчери пĕррремĕш вăрçă хыççăн Совет Союзне хирĕç пыракан çынсем те Польшăн Керзон линийĕн леш енчи территорие хапсăнма право çук, тесе каланă. Польша правительстви калани уйрăм çынсем «Совет Союзне хирĕç кĕрешекен Германи хĕçпăшалĕ» пулса юлма тăрăшнине палăртать.

Словаксен Питтсбургра тухакан «Людовы Денник» хаçачĕ Польша правительствин политикине «пĕрлешÿллĕ наци сене пĕр-пĕрипе хирĕçтерсе яма хăтланакан политика» тесе хакланă.

БИСКАЙ ЗАЛИВНЕ ХĂРУША ВЫРĂН ТЕСЕ ПĔЛТЕРНĔ

ЛОНДОН, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Англин тинĕс-çар министерстви çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă: 150 пин тăваткал миля пысăкĕш района—тĕрĕссипе илсен пĕтĕм Бискай заливне — суднăсем çÿреме хăрушă вырăн тесе пĕлтернĕ.

ВАШИНГТОН, февралĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Тинĕс-çар министрĕ Нокс пресс-конференцире çапла каланă: акăлчансем суднăсене Бискай заливĕнче çÿреме чарни питĕ нумая пĕлтерекен япала пулта тăрать. Çак ĕçе акăлчансем Хĕвеланăç çурчăмăрĕнче США правительстви тунă ĕçсемпе пĕр вăхăтрах тунă. Вăл Германие Франци урлă таварсем тăратас ĕçе пĕтĕмпех чарса лартĕ, çавăн пекех тата Испанирен таварсене вăрттăн илсе пырас ĕçе те чарса лартĕ. Çак ĕç вăл, тенĕ Нокс, Германие çавăрса илнĕ ункă хĕсĕнсе пынине пĕлтерет.

КĔСКЕН

** Дание нумаях пулмасть кайнă нимĕç железнодорожникĕсен ушкăнне каялла Германие чĕнсе илнĕ. Вĕсене «политика тĕлĕшпе шанчăксăрри» палăрнă пирки кăларса янă.

** Италири Сесто Сан Джованни ятлă хулара нумаях пулмасть вырăнти фашистсен организацийĕн çуртне тапăннă. Пуху пынă вăхăтра çав çурта хĕçпăшаллă вунă çын çавăрса илнĕ. Вĕсенчен иккĕшĕ пухăннă çынсене автоматсемпе пенĕ. Вилнисем те, аманнисем те пур. Пуху пыракан пÿлĕме 4 граната пăрахнă. (ТАСС).

Лăпкă çын

(КАЛАВ)*

Леонид Агаков

Çапăçу тăватă сехетре тапранчĕ. Икĕ сехет хушши артиллери кĕмсĕртетнĕ хыççăн, тăшманăн позицийĕсем çине пирĕн самолетсем—пĕр ушкăн хыççăн тепри, умлăн-хыçлăн вĕçĕ-хĕррисĕр вĕççе пырса çĕмĕрме пуçларĕç. Таврара пĕтĕмпех чĕтресе, киçренсе тăчĕ, снаряд е бомба çурăлман вырăн та юлмарĕ.

Нимĕçсем нумай тÿссе лараймарĕç, малти траншейăсемпе окопсенчен сиксе тухса—каярахри линисем çине тарма тытăнчĕç. Çапах та, кунта та чарăнса тăраймарĕç вĕсем — пирĕн пехота хыçрапах хăваласа пычĕ. Пирвайхи темиçе ял вара пирĕн алла çапăçусăрах лекрĕ. Кăнтăралла сулăнсан тин, самаях çÿллĕ сăрт çинче вырнаçнă сала патне çитсен, вăйлă çапăçу çыхланса кайрĕ.

Кунта нимĕçсен иккĕмĕш оборона линийĕ пулнă. Ана вĕсем малтанах хатĕрлесе, унта темĕн тĕрлĕ укреплениесем туса тултарнă мĕн. Шуйттанла чеелĕхпе лартса тухнă огневой точкăсенчен пульăсем пăр пек çурĕç. Вĕсенчен ниçта та пытанма май пулмарĕ, çавăнпа та пехотăн ирĕксĕрех çĕр ăшне чакаланса кĕрсе выртма тÿр килчĕ.

Пирĕн артиллери каллех ĕçе тытăнчĕ. Нумай расчетсем тÿрĕ наводкăна тухрĕç. Татах пĕр сехет хушши пĕтĕм таврăлăх чĕтренĕ. Унтан вара тепĕр хут стрелоксем çĕкленчĕç. Хăшпĕрисем ĕнтĕ ялăн анат вĕçĕнчи анкартисем патнех çитрĕç, нимĕçсен траншейисене гранатăсем вăркăнтарма пуçларĕç...

Анчах сылтăм флангра ниепле те малалла кайма май килмерĕ. Пĕр пахчара виç амбразурăллă пит çирĕп дзот пулнă кунта. Мăшăрланă виçĕ пулемет пур енелле те таттисĕр вилĕм тăкса тăнă, пуça çĕкleme те паман. Пирĕн орудисем те печĕç ун çине, минометсем те пĕрмай тÿпкерĕç—дзот пурĕпĕр путланмарĕ.

— Тухатнă пуль ку шуйттан йăвине, тьфу!—тарăхса сурчĕ наблюдательнăй пунктра çамрăк комбат. Вăл ĕнтĕ тахçантанпах ку дзот çинчен куç илмесĕр, бинокль витĕр сăнаса тăнă. Яла сылтăм енчен шăвах виççĕмĕш батальон çĕмĕрсе кĕмелле пулнă, анчах çак киревсĕр дзот пĕтĕм çула картласа лартнă, пĕр шит те малалла кайма паман. Ăна путармасăр яла кĕрессия çинчен шутламалли те пулман.

— Вот халера! Мĕн шуйттанĕнчен тунă ăна, ниепле те çĕмĕрĕлмест... Темиçе снаряд тÿп-тÿрех лекрĕ-çке!

Комбат ывăнса çитнĕ куçĕсене шăлкаласа илчĕ те, каллех бинокль витĕр пăхса сăнама тытăнчĕ.

Боецсем çав-çавах дзотран 250—300 метрта çĕр çумне йăпшăнса выртрĕç. Çутăлакан пульăсем вĕсен хушшипе çыххи-çыххипе вĕççе иртрĕç. Кашни темиçе секундрах дзот çывăхĕнче пирĕн снарядсемпе минăсем çурăлса, çĕре чава-чава сирпĕтрĕç.

— Штурмпа илесси ĕнтĕ куна... Халăх нумай пĕтме пултарать,—терĕ комбат хăйпе юнашар тăракан штаб начальникне.—Мĕнле шутлатăн? Намăс куратпăр вĕт, капла, лекет вара генералтан пире...

— Тăхтар-ха пăртак, тен «вăрçă турри»*) пулăшĕ,—ответлерĕ лешĕ, комбат пекех куçне бинокльрен уйăрмасăр.

Вăхăт шурĕ. Лару-тăру улшăнмарĕ. Сулахайрисем ĕнтĕ урам вĕçне пырса кĕрсе, пÿртсем хушшинче çапăçма тапратрĕç, сылтăм фланг хусканаймарĕ... Кĕç комбата полк командирĕ телефон патне чĕнсе приказ пачĕ:

— Текех пĕр минут та тытăнса тăма юрамасть. Хуçа (дивизи командирĕ ĕнтĕ) штурмлама хушать, епле пулсан та ял вĕçне тухса, тăшманăн чакса каймалли çулне татмалла.

— Аңланатăп,—терĕ те ăна хирĕç комбат, трубкăна хурса тарăнăн сывласа ячĕ.—Вот, инкек килсе тухрĕ пирĕн тĕле, мать честная!

— Чим-ха, чим... — терĕ çав хушăра çаплах бинокль витĕр пăхса тăнă штаб начальникĕ.—Эп питĕ интереслă япала кура пуçларăм...

— Мĕн?—Комбат та часрах бинокле куç патне тытрĕ.

— Пирĕн пĕр боец дзот патнелле шăвать...

— Пулма пултараймасть!

— Ман куç умĕнчех пĕр 80 метр шурĕ...

— Аçтарах вăл?

— Ав, утă купи пек йывăç тĕминчен сулахаярах.

— Чăнах та!

— Татах шăвать... шăвать... чаранчĕ... Куратăн-и?

— Куратăп. Кам-ши вăл?

— Калама хĕн, çурăмĕ çеç курăнать вĕт.

— Эх, çиттĕрччĕ! Çитсен мĕн те пулин тăватех ĕнтĕ вăл, тупата!

— Пĕр икĕ граната пулсан—ним те мар хупласа хурать...

— Каллех хусканчĕ, шăвать...

— Анчах пулемет ун çинеллех перет-çке! Эх!...

— Çапах та, малаллах пырать-ха вăл, шăвать...

— Тупата, герой! Пульăсем çинех пырса кĕрет-çке... Кам-ши вăл, камăн çынни?

— Яблоков ротинчен пулма кирлĕ.

— Чĕрĕ юлсан та, вилĕ пулсан та манма юрамасть ăна... Тĕлĕнмелле хăюллăх ку, хуть те мĕн кала!

— Чарăнчĕ... Хускалмасть... Неушлĕ вĕлерчĕç?

Комбат, ниçта кайса кĕреймисĕр, сăнаса тăнăскер, тутине çыртса лартрĕ. Çак самантра вăл тем тума та, нимĕçсен дзочĕ умнелле çăмăр пек çăвакан пульăсем айĕн шăвакан боеца пулăшмашкăн хăй тăрса чупма хатĕр пулчĕ.

Минут хыççăн минут иртрĕ... Калама та çук вăрăм пулчĕç вĕсем! Дзот патне пĕр 50—60 метр тарăнах шуса çитнĕ боец хусканмарĕ. Амбразурăсем витĕр тăшман пулемечĕсем малтанхи пекех пĕр чарăнмасăр вилĕм сапса тăчĕç.

— Паллах, вилнĕ вăл,—терĕ комбат пусăранчăк сасăпа.—Çавăн пек çĕрте этем ăçтан хăтăлса юлтăр? Генерал приказне пурнăçлас пулать. Штурмлас... Урăх ним тума та çук халь тин. Ротăсемпе çыхăн...

Штаб начальникĕ ăна ответ парас вырăнне йывăррăн сывласа ячĕ.

— Эпĕ ĕç урăхла пулса тухасса шаннăччĕ...

Урăх ним те каламарĕ. Окопран тухрĕ те, çÿллĕ хăмăш ăшшĕн иккĕмĕш рота еннелле хырăмпа шуса кайрĕ.

Комбат тата тепĕр хут дзот çывăхĕнче выртакан боец çине пăхса илчĕ. Паçăрхи пекех, вăл пĕртте хусканман.

— Çапах та, ку герой кам пулнине пĕлес-ха, унăн паттăрлăхĕ çинчен çемьине хамăнах çырса ярас... — шухăшларĕ комбат.

Геройĕ—ĕнерхи обозник, рядовой Иван Куракин пулнă...

Ана ĕнтĕ пурте вилнĕ тесе шутланă, анчах та вăл чĕрĕ. Чăнах та, çутăлакан вĕри пульăсем ăна темиçе çĕртен те шăтарса кайнă, унăн суранĕсенчен пĕрмай юн сăрханнă. Çапах та вăл сывлана-ха, унăн чĕри те тапнă, ăс-пуçĕ те чиперех ĕçленĕ.

— Пурпĕрех çитетĕп...: Пурĕпĕр сирпĕтетĕп сире, сволочсене...—тенĕ вăл шăл витĕр, сылтăм аллинчи противотанковăй гранатăна хытăран хытă чăмăртаса.—Тавăратăп сире... Арăмшăн та, ачасемшĕн те...

Иван Куракин халь юри вилмĕш пулса выртнă. Малтанах вăл дзот патне курăнми пытанса çитме ĕмĕтленнĕ, икĕ йăран хушшипе чылай вăхăт ним сиен курмасăрах шуса пынă, пульăсем ун çийĕпе шуса иртнĕ, çурăм çинчи шинельне çеç шăтара-шăтара кайнă, анчах каярахпа, пулясем харăсах темиçе çĕртен пырса сăхсан, Куракин кăшт лупашкаллăрах вырăна çитнĕ те, нимĕçсене ултала ма шут тытнă.

— Вилнĕ пек пулас...: Вилнĕ çынна тапăнсăр перес çук вĕсем...: Пуçăм сывă юлсан, çав çавах çитсе кĕрслеттеретĕп! Кăтартам эп вĕсене...

(Малалли пулать).

*) артиллери.

*) Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммуни» 31-мĕш №-че.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

ШКУЛСЕМПЕ ВУЛАВ ÇУРЧĔСЕНЕ

Чăваш писателĕсен союзĕ кăларса тăракан «Илемлĕ литература» альманаха 1944-мĕш çулшăн çырăнса илме васкăр! Альманахра ялти драмкружоксенче лартмалли пьесăсем, Отечественнăй вăрçă фронтĕнчен килнĕ очерксемпе калавсем, повеçсем, сăвăсемпе поэмăсем пулаççĕ. Кашни номертех чăваш писателĕсен пултарулăхне е вĕсен уйрăм кĕнекисене пăхса тухакан статьясем, библиографиллĕ заметкăсем пичетленеççĕ.

«Илемлĕ литература» номертен номерех халлапсемпе юмахсен, сăвă-юрăсен, тăванла халăхсен тата тĕнче литературин паха тĕслĕхĕсемпе паллаштарать.

Альманахăн яланхи пайĕсем: проза, поэзи, драматурги, фольклор, критикăпа библиографи.

Альманаха çырăнса илмелли хак: 12 уйăхă—24 тенкĕ, 6 уйăха—12 тенкĕ.

Подпискăна пур пуштă уйрăмĕсемпе письмоносецсем те йышăнаççĕ.

Союзпечать.

Чувашгиз.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31. издательство конторин —0—23.

НТ 00342 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.